**«Хупах хăлха Илюк»** (повесть сыпăкĕ)

**Эпир Кришнăпа паллашатпăр**

— Кришна, тĕлĕнетĕп эп санран. Пĕр шухăш çеç иккен санăн: çиесси те çывăрасси. Ялан чăмлан. Чăмламан чух çывăран, — терĕ йывăç туратти çинчен аялалла чăр-чар пăхса тăракан Чĕкеç.

Пĕччен пĕр ката пек курăнса тăракан пальма айĕнче слон çури тăрать-мĕн, Чĕкеçе пула чăмлама чарăнмалла пулчĕ-ха унăн, çакăншăн кăмăлсăрланчĕ вăл, пуçне пи-и-тĕ хуллен çĕклерĕ. Тути-çăварĕ те унăн. аран-аран çеç çавăрăнкаларĕ пулас, сăмаха та юлхавлăн хуравларĕ:

— Манăн тата мĕн тумалла, тет?..

Чĕкеç, те тĕлĕннипе, те тарăхнипе, чăлт! сиксе илчĕ, вăл перĕннĕ çулçă, тĕплĕрех ăнлантарса парсан, Инди вăрманĕнчи шăналăк пек анлă çулçă, чĕтресе тăчĕ.

—Мĕ-ĕн? Мĕн терĕн? Пĕлетĕн-и эс: Чăваш çĕршывĕнче, Шупашкар хулинче, Атăл хĕрринчи шурă çуртăн чккĕмĕш хутĕнче пĕчĕк Хĕветуç пурăнать? Вăл кашни кун: «Мĕншĕн манăн слон çури çук-ши? Эп ăна «Илюк» тесе чĕннĕ пулăттăм! Хăçан килет-щи вăл?» — тесе тĕмсĕлет. Эсĕ вара кунта апатшăн çеç çунтарса тăратăн! Янах шăммисем те ыратмаççĕ-ши санăн?

—Ман янах шăммисем ыратмаççĕ, пĕр чарăнмасăр чамла-чамла, вĕсем пĕтĕмпех тĕрекленсе çитнĕ.

—Ах-х! — терĕ чĕкеç, ашчикки тăвăнса çитнĕрен вăл вăрт-варт çаврăнкаласа илчĕ.

Чĕкеç çапла хĕрнĕçем хĕрсе пынăран-и, Кришна та аптăраса кайрĕ. Тем пулчĕ слон çурине: апат-çимĕçе таçтан-таçтан асăрхакан куçĕ умрах усăнса тăракан сĕтеклĕ çулçăсене те курми пулчĕ, хобочĕ те вĕсене ярса илме пĕлеймерĕ. Сулçăсем вара, хăрушла инкек-синкекрен хăтăлна евĕр, хавассăн çатăлтатса илчĕç.

Кришна Чĕкеçе лăплантарма тăрăшрĕ:

— Ман анне çапла тет, «ачасем вĕсем, йĕрсен-йĕрсен, хăйсемех чарăнаççĕ», тет... Хĕрача та тахçанах лăпланчĕ пулĕ...

— Эс ма търех аннъ сăмахне аса илен? Сан хăвăн пуçу çук-им?

Кришна хоботне çĕклерĕ те пуçне хыпашласа илчĕ. Вара вăл, такăнкаласа, çапла хуравларĕ:

—Пуçĕ пу-у-ур...

—Апла пулсан, аннъ пуçĕпе мар, хăвăн пуçуца шухăшласа пăх-ха! Яланах час лăпланаятăн-и, хăш чухне лăпланайманни-йапанайманни, тарăхса кайни пулмасть-и?!.

—Пулать ун пекки! Хăш чухне çийĕнчех лăпланатăн, тепĕр чухне — ниепле те, ниепле те лăлланма май çук, ыттисем сана вăйпа лăплантарасшăн та — ку вара пĕтерсех хурать: эс тага хытăрах хурланма пуçлатăн!

—Тĕрĕс! Питĕ тĕрĕс! Ман йăва шăпах. Хĕветуçсен чуречи хашакĕ тăрринчеччĕ. Ача кашни кун Илюкшăн макăрать. Амăшĕ: «Слонсем кунта пурăнмаççĕ, кунта килме те пултараймаççĕ»,— тесе ъкĕтлет. Хĕветуç хăйĕннех перет: «Ытти слонсем килеймесен те, ман Илюк килетех!» — тесе çеç тăрать вăл! Ун ашшĕ — чаплă сунарçă, пĕррехинче вăл ачине епле те пулин лăплантарасшăн пулчĕ те: «Пĕррех хут сана упа тытса килсе паратăп!» — терĕ. Кирек мĕнле ача та упапа пеĕрле, пурăнма хаваслансах килĕшмеллеччĕ. Хĕветуç вара къренчĕ çеç. «Чи вăйли, чи паттăрри — Илюк, ман унпа çеç туслă пулас килет!» — терĕ вăл çавăн чух. Ним тăвайман енне ашшĕ: «Ахаль упа мар, виçĕ çураллă упа тытса паратăп сана, паянах тытса килетĕп!»— терĕ. «Пĕри те кирлĕ мар!» — килĕшмерĕ Хĕветуç. Эх, тарăхса кайрĕ вара ашшĕ!

— Ашшĕн тарăхмалла сăлтав пулман-çке? — тĕлĕнчĕ Кришна. — Хĕветуç тĕрĕсне каланă: чăнах, пире, слонсене, упасемпе танлаштарма кирлĕ мар, вĕсене пирĕнпе танлаштарни — калама çук пысăк йăнаш:

слонсем упасенчен çĕр хут, çĕр хут кăна мар-ха, çирĕм вунултă-хут вăйлăрах!

— Чăващ çĕршывĕнче часах çуркунне пуçланать. Илемлĕ çĕрщыв вăл! Хам ăшăмра эпĕ ăна «Сарă чечексен çĕршывĕ» тетĕп. Унта ĕшни-ĕшнипе, улăхĕ-улăхĕпе, çулсем-сукмаксем айккипе, тăкăрлăксем лаптăкăшĕпе сарă чечексем ъсеççĕ, йĕри-тавралла шевле сапалаççĕ! Ыран-паян эп çула тухатăп. Вĕçсе çитĕп сарă чечексен çĕршывне! Унта пурте хаваслĕ пулĕç! Хветуç та чупкаласа-сиккелсе çеç çъре, анчах та вăл, вылянă вăхăтрах тăп чарăнса, куçне аллипе-картласа, кăнтăралла тиккерет. Ёук, лăпланман вăл! Ёаплах Илюка кĕтет вăл! Хĕветуç тĕмсĕлнипне-хурланнине курсан, юрлас тенĕ юррăмсем те янн! каяс вырăнне ах-х! тесе пăчланĕç....

— Миçере вăл хĕрача?

— Кăçал виççĕ тултарать.

— Манпа пĕр çулта...— Кришна темĕншĕн салхулланса кайре, çăвара хурсанах ирĕлекен улма-çырларан пăрăнса, ватă бамбук айне пырса тăчĕ те, шăв-шавлă тавралăх шухăшлама ан чăрмантартăр тесе пуль, лапсака хăлхине лăстрр! усса, куçне хупларĕ, вара шухăша путрĕ...

Кăштахран çакăнта икĕ мăн слон килсе тухрĕ.

— Кришна, ывăлăм, сан валли тутли илсе килтĕм! — терĕ слои ами.

Кришна, хăйне такам йĕкĕлтенинчен вăтаннă евĕр, пуçне пăркаларĕ.

— Ашшĕ, чирлемен-и пирĕн ача, «тутли» тесенех çĕр çĕмĕрсе ъхĕрекенччĕ вăл, халь сĕнксе тăрать тем, мĕскĕннĕн курăнать.

Кришна къреннĕ сасăпа хуравларĕ:

— Апат анмасть... Пачах та...

—Ай-яй! — терӗç мăн слонсем. — Мӗн япала ку?! Вӗсен сассипе вăрман та кашласа илчӗ.

—Кришна, ывăлăм...

— Кришна мар, малашне мана Илюк темелле пулать...

— Ах! Аташтаракан чир ку! — хыпăнса ӳкрӗ слон ами,

— Эп чирлӗ мар. Паян эп нихçанхинчӗн те сывăрах.— Слон çури ашшӗ енне çаврăнса тăчӗ.— Атте, ман санпа, пӗр пысăк ӗç пирки калаçмалли пур.

Ашшӗпе ывăлӗ, усăнса аннă явкаланчăк туратсене сире-енре, лотоссен кӳлли енне утса кайрӗç.

—Ямастăп! Ямастăп! — вăрмана пăлхатса кăшкăрчӗ слон ами. — Пӗчӗкскер, вăл епле тухса кайтăр?!

—Лăплансам, амăшӗ, — терӗ слон аçи. — Ман санпа пӗр илемлӗ ят çинчен калаçасчӗ!

Слон ами тата хытăрах ӳхӗрсе ячӗ.

— Чунсăр пуль эс! Ача, ав, таçти çӗршыва тухса каясшăн! Эс, хыпăнса ӳкес вырăнне, темле ятсем-хушаматсем пирки шухăшлатăн!

— Шапах çавăнпа, Кришна Чăваш çӗршывне кайма шутланиле, пӗр илемлӗ ята асанасчӗ! Каласамччӗ эсӗ хисеплӗрен те хисеплӗ амăшӗ, асамлă саслăскер, лăпвкă чухне кӗрен-лотоссем ăшă çилпе пупленине, тарăхнă вăхăтра чул тусем ишӗлнине аса кӳрекен саслăскер, хăвăн ятна манса кайман-и эсӗ?

—Мӗн пулна сана, ашшӗ? Хăвăн ятна ху мӗнле манатăн? Ман ят — Савитри!

—Са-вит-ри... — пуçне кăмăллăн ухса тăчӗ слон аçи.— Аçу-аннӳ сана пӗлсе ят панă! Эс яланах илемлӗ пуласса вӗсем иккӗленмесӗр шаннă! Савитри, хăвна кам ячӗпе чӗннине манса кайман-и эсӗ?

—Чипер калаç-ха, ашшӗ! Савитрине кам манма пултартăр! Индире авалтанпа ун çинчен юрă юрлаççӗ!

—Манăн çав юррăн веçне илтесчĕ!

—...Вут куçлă Яма Савитрине çапла калать: «Манран пурте хăраççе. Эсĕ, акă, пĕр шикленмесĕр, ман хыçран утатăн. Кала-ха, мĕншĕн манран хăрамастăн? Халран кайнă пулин те, каялла çаврăнмастăн?» Савитри çапла хуравлать: «Мана тĕрĕслĕх çула илсе тухрĕ. Ырăпа тĕрĕслĕх — пĕртăван, çавăнпа эс те никамран та хăрамастăн, çавăнпах малалла утатăп».

— Тавах! Ёакна илтесшĕнччĕ те эпĕ! Аслă аташун сăмахне асра тытса тăрсам эс, эпĕ малалла калам! Пĕчĕк хĕрача кунĕн-çĕрĕн паттăр слон çурине кĕтет. «Ёук ун пек слон!» — тĕççĕ ăна аслисем. «Пур ун пек слон!» — тет хĕр ача. Савитри, асамлă саслăскер, сассупа е кĕрен лотоссем ăшă çилпе пупленине, е чул тусем ишĕлнине аса кърекенскер, пĕлтерсем шухăщна: йăнăшать-им Хĕветуç ятлă çав хĕрача?

— Хĕветуç тĕрĕс калать: пур ун пак слон çури! Мĕн ара, паттăртан кайя-им манăн Кришна?

—Пирĕн ывăл çав ача патне тухса каясшăн. Ырă ĕç мар-и ку? Ырăпа тĕрĕслĕх пĕртăван марччĕ-щи, Савитри?

Слон ами шăпланчĕ. Кăштахран вăл, сассипе, чăнах та, кĕрен лотоссем ăшă çилпе пулленине аса илтерсе çапла каларĕ:

— Чĕкеçрен çул ыйтса пĕлер, кайран, таса Ганг хĕррине анса, ывăлăмăра Чăваш çĕршывне кайма пиллер...

*Лисина, Е. Эпир Кришнăпа паллашатпăр : [«Хупах хăлха Илюк» повесть сыпăкĕ] / Е. Лисина // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 299-301.*